Муркаш район хаçачĕ

Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

75 (7606) № ✻ Шăмат кун, 2008 çулхи октябрĕн (юпа) 4-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Октябрĕн 5-мĕшĕ – Учительсен кунĕ

ПЕДАГОГИКА ĔÇĔН ХИСЕПЛĔ ВЕТЕРАНĔСЕМПЕ ĔÇЧЕНĔСЕМ!

Сире професси уявĕпе – Учительсен кунĕ ячĕпе чĕререн саламлатăп!

Эсир пĕлӳ тĕнчине алăк уçакансем, хăвăрăн воспитанниксене пурнăçра хăйсен вырăнне тупма пулăшатăр, тăван çĕре тата çынсене юратма вĕрентетĕр. Шăпах ĕнтĕ Учительрен, унăн професси ăсталăхĕнчен тата харпăр хăйĕн пахалăх енĕсенчен çамрăк гражданселле çĕр-шыв шăпи ытларах килет. Педагог ятарлă пĕлӳ илни, вĕрентĕвĕн çĕнĕ методикисене пĕлни кăна çителĕксĕр. Паян ачасене хăйсене шухăшлама, тĕрĕс йышăнусем тума тата уншăн ответ тытма хăнăхтармалла.

Вĕрентĕвĕн хальхи конкурентлă системи – ĕç-хĕлĕн пур сферисенчи ăнăçусен тытăмĕ. Чăваш Ен отрасле анлăн модернизацилессипе Раççейре малтисенчен пĕри пулчĕ. Вĕрентӳ учрежденийĕсен аттестацийĕн, пĕрлехи патшалăх экзаменĕсен лайăх кăтартăвĕсем, çĕр-шыври паллă аслă вĕрентӳ учрежденийĕсене пиншер выпускник вĕренме кĕни хăех тĕп çул-йĕре тĕрĕс суйласа илни пирки калать. Чăваш Республикинче 2040 çулчченхи тапхăрта вĕрентӳ ĕçне аталантармалли Стратегие йышăнни питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Республикăра пултаруллă, ăста педагогсем сахал мар. Вĕсем вĕрентӳ пахалăхне ӳстерессишĕн çине тăрса ĕçлеççĕ, пысăк пĕлтерĕшлĕ конкурссенче çĕнтерӳçĕсем пулса тăраççĕ. Учительсене ĕçре хавхалантарассипе сахал мар тунă. Педагогсене ĕçшĕн тӳлессин çĕнĕ системипе усă курма тытăннă май хăйсен пултарулăх шайĕпе туллинрех усă курма тата тивĕçлĕ ĕç укçи илме майсем пур.

Вĕрентӳ ĕçĕн ветеранĕсене хăйсен пархатарлă ĕçĕшĕн, юратнă ĕçе чунтан парăннишĕн тата çак туйăма çамрăк педагогсен чунне хывнишĕн тав сăмахĕ калатăп. Çирĕп сывлăх, çĕнĕ çитĕнӳсем, ăнăçу, телей тата юрату сунатăп!

Н.В. ФЕДОРОВ,
Чăваш Республикин Президенчĕ.

ХИСЕПЛĔ УЧИТЕЛЬСЕМ! ВĔРЕНТӲ ĔÇĔН ХАКЛĂ ВЕТЕРАНĔСЕМ!

Сире професси уявĕпе – Учительсен кунĕпе чĕререн саламлатăп!

Мĕн авалтанпах учитель ĕçĕ чи хисеплĕ те сумлă ĕç пулнă. Учитель – управçă, пултаруçă, çĕнĕлĕхсене пурнăçа кĕртекен. Хăвăрăн професси ăсталăхĕпе тата талантпа ырă шухăш-кăмăла, ăслăлăха ĕмĕртен ĕмĕре тăсас тесе эсир ачасене хавхалантаратăр,кăмăлне çĕклетĕр.

Учитель – нихăçан ватăлми сăмах! Вăл яланах уççăн, çĕнĕлле илтĕнĕ. Учитель вăл – чун туртăмĕ, ачасене иксĕлми юратни.

Уяв кунĕнче сире, хисеплĕ учительсем, çирĕп сывлăх, телей, творчествăлла çĕнтерӳсем, ăнăçу сунатăп. Çемьесенче яланах килĕшӳ тата малашлăха ĕненни пултăр. Сирĕн пархатарлă ĕç – район, республика тата çĕр-шыв пуласлăхĕшĕн – кашни ачарах ырă туйăмсем çураттăр. Çак çăмăл мар ĕçе суйлани яланах сире савăнăç кăна кӳтĕр. Уяв ячĕпе сире!

Ю.А. ИВАНОВ Район пуçлăхĕ.

ХАКЛĂ УЧИТЕЛЬСЕМ!

Сире, пархатарлă професси çыннисене, хăвăрăн професси уявĕпе – Учительсен кунĕ ячĕпе чĕререн саламлатăп!

Сире чыслă ĕç шанса панă – аслă та вăйлă Раççейĕн тивĕçлĕ гражданĕсене хатĕрлессине. Ку вăл çăмăл ĕç мар, пысăк ответлăх та пысăк чыс. Эсир хăвăрăн вĕренекенсенче пĕлӳ патне ăнтăлассин туйăмне çуратма, тăван республикăна аталантарассин никĕсне хывса хăварма тивĕç.

Пурсăра та çирĕп сывлăх, оптимизм, пултарулăх ĕçĕнче çĕнĕ çитĕнӳсем, ăнăçу, телей тата юрату сунатăп!

Н.М. БУДАРИН,
РФ Патшалăх Думин депутачĕ, Раççей Геройĕ, летчик-космонавт.

Тĕл пулу чуна уçрĕ

Октябрĕн 1-мĕшĕнче Ватă çынсен кунне паллă турăмăр. Çак кун пур çĕрте те хăйсен ĕç коллективĕсенче ĕçленĕ ватăсене чĕнсе çавра сĕтел хушшинче калаçу ирттерчĕç. Район администрацийĕн ларусем ирттермелли пĕчĕк залне вара хăй вăхăтĕнче райсовет ĕçтăвкомĕнче, КПСС тата ВЛКСМ райкомĕсенче, профсоюз райкомĕнче, район администрацийĕнче ĕçленĕ ĕç ветеранĕсене чĕнсе чысларĕç. Чи малтанах район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов вĕсене уяв ячĕпе чунтан саламларĕ:

– Кашни çыннăн пурнăçĕ – уйрăм истории. Эсир район аталанăвĕшĕн çав тери тăрăшса ĕçлерĕр. Тавах сире çакăншăн. Паян вара эпир сирĕн опытăра тĕпе хурса ĕçлетпĕр, сирĕнтен вĕренсе пыратпăр. Çакă пире ӳсĕм çулĕпе малалла кайма пулăшать. Кăçалхи çур çул пĕтĕмлетĕвĕсемпе республикăри социаллă-экономика аталанăвĕн ăмăртăвĕнче пирĕн районăмăр 3 вырăна тухрĕ. Республика кунне те япăх мар ирттертĕмĕр. Сирĕн тӳпе çителĕклех кунта, – терĕ Юрий Александрович. – Тавах сире эсир пурришĕн, çитĕнекен ăрушăн ырă тĕслĕх пулнăшăн.

Ветерансене çавăн пекех Чăваш Республикин Сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министерствин пирĕн районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳçи Н.П. Петрова саламларĕ. Пенси фончĕн районти управленийĕн ĕçченĕсемпе пĕрле халăха вырăнсенче хăйсен ыйтăвĕсемпе йышăнасси ырă йăлана кĕнине палăртрĕ.

РФ Пенси фончĕн пирĕн районти управленийĕн ертӳçи Е.М. Александрова ватăсене уяв ячĕпе саламланă май пенси тӳлессинчи çĕнĕлĕхсем çинче те чарăнса тăчĕ.

Ветерансем хăйсем ĕçленĕ çулсене аса илчĕç, пĕр-пĕринпе калаçса чунĕсене уçрĕç.

Л.ПАВЛОВА.

Предпринимательсен ыйтăвĕсемпе

Патшалăх вĕсене те пулăшать

Пĕрле пуçтарăнса калаçни çĕннине пĕлме, ăна пурнăçа кĕртме пуçлама хавхалантарать. Районта Пĕчĕк предпринимательство кунне ирттересси те çав сăлтавпах ĕнтĕ ырă йăлана кĕчĕ. Иртнĕ кĕçнерни кун ăна «Заря» чикĕллĕ явапăхлă обществăна тухса ирттерчĕç. Унта районти пĕчĕк предприятисен ертӳçисем, уйрăм предпринимательсем хутшăнчĕç. Республика тĕп хулинчен представительсем йышлăн килчĕç. Асăннăн мероприятие район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ В.Г. Никитин ертсе пычĕ.

Чи малтанах район администрацийĕн экономика пайĕн ертӳçи Э.И. Симакова районта пĕчĕк предпринимательство мĕнле аталанса пынипе паллаштарчĕ.

Чăваш Республикин Экономика аталанăвĕн тата суту-илӳ министрĕн çумĕ А.А. Быченков Муркаш район администрацийĕ пĕчĕк предпринимательствăна пулăшас тĕллевпе республикăри тĕрлĕ программăсене активлăн хутшăннине палăртрĕ. Çавăн пекех Александр Анатольевич пĕчĕк предпринимательствăна пулăшмалли мелсем çинчен каласа пачĕ.

Предпринимательсен кунне хутшăннисемшĕн ытти тухса каласакансене итлеме те кăмăллă пулчĕ. Пĕчĕк тата вăтам предпринимательство субъекчĕсене лизингпа пулăшма, республикăн Гаранти фондчĕн поручительствипе усă курса кредит пама май пуррипе паллашрĕç. Бизнес технологин шкулĕ ĕçĕхĕлĕпе паллашма та кăсăклă пулчĕ.

Перекет Банкĕ пĕчĕк тата вăтам предпринимательство субъекчĕсене мĕнле условисемпе пулăшать, налук тӳлессинчи тата пенси страхованийĕнчи çĕнĕлĕхсем – ку темăсем те пуриншĕн те усăллă пулчĕç. Пĕчĕк предпринимательство кунĕнче, чăннипех те, уçă та интереслĕ калаçу ирттрĕ. Предпринимательсем хăйсен малашнехи тĕллевĕсемпе те паллаштарчĕç.

Л. ТУКТИНА.

Вулакансене пĕлме

Патшалăх Канашĕн депутачĕ Муркашсене йышăнать

2008 çулхи октябрĕн 7-мĕшĕнче «Единая Россия» партин обществăлла йышăну пунктĕнче çынсене Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ Виктор Александрович Морозов йышăнать. Суйлавçăсене тĕрлĕ ыйтусемпе 14 сехетрен тытăнса 16 сехетчен кĕтеççĕ. Обществăлла йышăну пункчĕ районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕн çуртĕнче 2-мĕш хутра вырнаçнă. Ыйтусене 2-11-80 телефонпа та пама пулать.

Юбилей

Саламлатпăр

Хамăрăн хаклă пĕрремĕш учителĕмĕре, вĕрентекене – Çурлатăри шкулĕнче вĕрентнĕ, Мăн Шаптак ялĕнче пурăнакан **Антонина Яковлевна ЕФИМОВАНА** Учительсен кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Эпир пĕрремĕш çул шкула кайни те кăçал çур ĕмĕр çитрĕ, çапах та вăл пирĕн асрах-ха. Эпир ăна çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, тулли телей сунатпăр.

Саламлаканĕсем: Çурлатăри шкулне 50 çул каялла вĕренме пынисен ячĕпе Лидия Смирнова.

Хисеплĕ **Эльвира Анатольевна ВАСИЛЬЕВАНА**, Кашмаш шкулĕнчи химипе биологи вĕрентекене Учитель кунĕпе саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул сунатпăр.

Салампа Ишаковсен çемйи.

Творчествăлла ĕçлесси – чи кирли

Ачасемпе ĕçлекенсем кашни кун хăйсен ĕçне мĕн те пулин çĕннине, интереслине кĕртсе пымаллине никамран лайăх пĕлеççĕ. Унсăр вĕрентӳпе воспитани туллин пурнăçланма пултарăймасть те. Çавăнпа та творчествăлла ĕçлесе пыни çеç ӳсĕмсен çулĕ çине кăларать. Тĕрлĕ грантсене çĕнсе илме май паракан «Вĕрентӳ» нацпроект вара творчествăлла ĕçлекен учительсене çĕршыв, республика тата район шайĕнчи конкурссене хутшăнма хав халантарать. Çак проектăн çĕнĕлĕхĕсемпе тан пыракан районти учительсенчен пĕри – Çатракассинчи вăтам шкулта ĕçлекен Альбина Васильевна Ятманова. Сăмах май, вăл – пĕлтĕрхи «Çулталăкри учитель» район шайĕнчи конкурсăн çĕнтерӳçи. Çак хастар учитель юрăташă ăсти те, тĕрĕçĕ те. Альбина Васильевна Э. Патмар тата С. Патмар кăларнă «Чăваш халăх культури» вĕрентӳ пособине кăларас ĕçе те хăйĕн тӳпине хывнă.

– Альбина Васильевна, сире ĕçтешсем питĕ ăшă кăмăллă, кашни ĕçех творчествăлла тăвакан учительсенчен пĕри тесе хаклаççĕ. Раççей Федерацийĕн Вĕрентӳ тата наука министерствин августри 1306 КН № Приказĕпе килĕшӳллĕ сире Хисеп грамотипе чыслама йышăнни те сирĕн ĕçе тивĕçлипе хакланине кăтартса парать. Анчах мĕнрен пуçланнă-ха учитель çулĕ?

– Тавах ырă сăмахсемшĕн. Калас пулать, эпĕ ачаранпах врач профессине килĕштернĕ. Мана çав ĕç пысăк тимлĕх ыйтнипе те, чуна çывăх пулнипе те кăмăла каятчĕ. Анчах шкул пĕтернĕ хыççăн, шанчăксем сахалрах тесе шутланипе-ши, унта вĕренме каймарăм.

Эпĕ шкулта вĕреннĕ чухне ӳкерме юрататтăм. Ӳкерчĕксем те япăхах пулмастчĕç. Ман ĕççене шăпах пурнăç çулне суйламалли вăхăтра Юрий Николаев художник асăрханă. Вăлах Шупашкарти педагогика институтне вĕренме кĕме сĕнчĕ. Çапла вара эпĕ çак аслă шкулти художествăпа графика факультечĕн студентки пулса тăтăм. 1986 çулта вĕренсе пĕтернĕ хыççăн Шупашкарти 42-мĕш № шкулта рисованипе черчени урокĕсене вĕрентме пуçларăм. 1990 çултанпа Çатракассинчи вăтам шкулта ĕçлеме тытăнтăм.

Манăн атте те творчествăна юратакан çын. Манра та çав туртăм палăрнă ĕнтĕ. Аннерен вара ĕçе юратса тăвассине хăнăхса пынă.

(Вĕçĕ 6-мĕш стр.).

Наркотиксем сарассине хирĕç кĕрешекен комиссире

Ку тăшмана хирĕç кар тăмалла

Тунти кун наркотиксем сарассине хирĕç кĕрешекен районти комисси ларăвĕ пулчĕ. Ăна çак комисси ертӳçи Ю.А. Иванов ертсе пычĕ.

Ларура пĕрремĕш ыйтупа Çатракасси тата Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕсенче ăнăçăр çемьесемпе ĕçлессине пăхса тухрĕç. Ăнсăртран мар, çакăн пек çемьесенче пурăнакансем чи малтан наркотик серепине лекеççĕ. Йышăнмалла, çак сиенлĕ япала паян ялсене те çитрĕ. Лару-тăру Çатракассипе Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕсенче ансат мар. Кунта наркотик мăшкăлĕ пулнă çынсем пур. Паянхи тĕллев - çак чире сарăлса кайма памалла мар, çак шайрах пăчлантармалла. Апла пулсан вырăнти влаçсен ку енĕпе самаях çине тăмалла. Кунти мĕн пур учрежденисене, специалистсене çак сиенлĕ йăлапа кĕрешĕве явăçтармалла. Культура, физкультурăпа спорт учрежденийĕсем пушă тăмалла мар. Хальлĕхе пĕр çынсемех спорт командисенче, пĕр çынсемех художество пултарулăх коллективĕсенче. Халăхăн ытларах пайĕ валли массăллă мероприятисем йĕркелемелле, уйрăмах çамрăксене явăçтармалла. Профилактика ĕçне тăвасси çине пысăк тимлĕх уйăрмалла. Кунта медицина ĕçченĕсен пуçарулăхĕ кирлĕ.

Тĕрĕссипе каласан, вырăнсенче темĕн тĕрлĕ специалист пур. Анчах ял тăрăхĕсем тĕллевлĕ ĕçе йĕркелесе пыракансем пулса тăрайман. Кун пирки комисси асăннă ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене Ю.А. Кожевниковпа Г.П. Мазикова çирĕппĕн асăрхаттарса хăварчĕ.

Иккĕмĕш ыйтупа районта ирттернĕ «Мак» операци итогĕсене пăхса тухрĕç. Уголовнăй шырав аслă оперуполномоченнăйĕ М.М. Мясников пĕлтернĕ тăрăх, героинпа мак улăмне тупса палăртнипе 8 ĕç пуçарнă.

Наркотиксем сарнине хирĕç кĕрешесси яланлăх ĕç пулса тăчĕ. Çав тери йывăр ĕç. Çакна пурин те ăнланмалла. Çавăнпа пĕрлех çак усалпа пурин те пĕр çын пек пулса кĕрешмелле. Урăхла унăн çулне пӳлме те, хирĕç тăма та çук. Инкек пирĕн хапхаран парăнса иртĕ тесе лăпкăн ларма çук. Ку эрех-сăра мар, чылай хăрушăрах та тискер тăшман.

А. ИВАНОВ.